

Музейри А.В. Асламаса халаллан̆ кĕтес



А.В. Асламас (1974 ç.)

# Асламаса халăх манмасть

Чăвашсен паллă композиторĕ А.В. Асламас çуралнăранпа июлĕн 24-мĕшĕнче 85 çул çитрĕ. Анисим Васильевич тĕрлĕ жанрпа ĕçлесе нумай музыка хайлавĕ кĕвĕлесе хăварнă.

Вăл Етĕрне районĕнчи Вăрманкас Асламас ялĕнче çуралнă. Вĕсен аякри йăхри тăванĕ Ляви çак яла 1710 çулта йĕркелесе янă-мĕн, вăлах ăна ят панă. Ун ашшĕ Василий Степанович Васильев пĕлӳшĕн çунакан çын пулнă, икĕ класлă шкул пĕтернĕ, кĕнеке-хаçатпа туслă пулнă, хăйĕн тĕнче курăмне пуянлатнă. Шкулта учитель пулса ĕçленĕ, ăрури вĕрентекенсен династине йĕркелесе янă. Мăшăрĕпе, Татьяна Степановнăпа, çичĕ ача пăхса çитĕнтернĕ.

Униçĕм мĕн пĕчĕкренех юрă-ташă патнелле туртăннă. Шкула кайиччен аслисене курмалла çырма, вулама вĕренсе çитнĕ. 6–7 çултах вăл çапла каланă пулать: «Вулама, çырма пĕлетĕп, офицера каясси çеç юлнă ман».

Шкула ултă çултах кайнă. Ун чухнех вăл купăс калама пĕлнĕ. Сăмах май каласан, çичĕ ачаран Марийăпа (аппăшĕ) тата Шурăна (йăмăкĕ) çеç инструмент çывăх пулман. Ыттисем пурте купăспа ăста вылянă.

Униçĕм вара илтсе юлнă кĕвĕ çеммине тӳрех асра хăварнă, çав самантрах выляса кăтартма пултарнă. Улттăра чухнех вăл Питрав уявĕ ячĕпе Турай ялĕнче ирттернĕ ярмăрккăра купăс каласа курма пынисене тĕлĕнтернĕ.

Вăл ачаранах тăрăшуллă, лăпкă ача пулнă, шӳтлеме юратнă. Ытти ачасем пекех шкула çăпатапа çӳренĕ, кĕнеке-тетрадьсене пир сумккăра тытнă. Ĕмĕрхи туссемпе М. Петровпа (каярахпа колхоз фермин заведующийĕ пулнă), И. Ивановпа (Советский районĕнчи «Совет ялавĕ» хаçат корреспонденчĕ) тăмран шăхлич тума юратнă, «Лапталла», «Кустăрмалла» вăйăсене кăмăллана. Çулла Униçĕм ĕне кĕтĕвĕ кĕтнĕ, вĕренӳ çулĕ пуçланиччен тăрăшнă вăл унта.

Çичĕ класс пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти музыка училищине вĕренме кĕнĕ. Купăспа ăста калама пĕлни ăна шăпах пулăшнă та ĕнтĕ. Кунта вăл асамлă инструментпа, рояльпе, пĕрремĕш хут паллашнă. Пĕрремĕш курс хыççăн, нотăсене лайăхрах ăшра хывас тесе шыв тултарнă кĕленчесене шаккаса илемлĕ кĕвĕсем кăларма вĕренсе çитнĕ. Хăма çинче клавишсем ӳкерсе хурса пӳрнесене чупма хăнăхтарнă.

Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçи вăхăтĕнче музыка училищи 1941 çулхи октябрь уйăхĕнче вăхăтлăха хупăннă. А.В. Асламас 1942 çулхи кĕркунне вăрçа кайнă.

Малтан пехота училищинче вĕреннĕ, 1943 çулта фронта çакланнă. Брянскпа Орел хулисен çывăхĕнче, Белоруссире, Хĕвел тухăç Пруссире, Польшăра, Германире çапăçнă. Связист-телефонист, çыхăну енĕн пуçлăхĕ, полкри вĕрсе калакан оркестрĕн музыканчĕ пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче ăна 9 медальпе нагрӑдăланă.

Вăрçă хыççăн Киеври П.И. Чайковский ячĕллĕ консерваторийĕн теорипе композиторсен факультетне вĕренме кайса кĕнĕ. 1948 çулта чирлесе ӳкнине пула Шупашкара куçса килнĕ, музыка училищипе педагогика институтĕнче преподаватель пулса ĕçленĕ. 1950–1953 çулсенче Чăваш çамрăкĕсен театрĕнче музыка пайне ертсе пынă. Ун хыççăн Мускаври консерватори ăнаçлă вĕренме кĕрсе диплом илнĕ. Чăваш музыкăпа драма театрĕнче концертмейстер, педагогика институтĕнче, музыка училищинче преподаватель пулса тăрăшнă. 1961 çултанпа композитор пусĕпех музыка хайлавĕсем кĕвĕлес ĕçе пуçăннă.

А.В. Асламас çуралнăранпа 85 çул çитнĕ ятпа тĕрлĕ мероприяти ирттертĕмĕр. Çак ĕçе уйрăмах композиторăн тăван ялĕнчи шкул ачисемпе вĕрентекенсем хастар хутшăнаççĕ. Асламас шкулĕнче 20 çул ĕçлерĕм. Çав вăхăтра сахал мар материал пухса композитора халаллан̆ музей кĕтесĕ уçрăмăр. Кун-



*Кубок çĕнтерӳçисем*

та чăваш чĕлхипе литература, «Тăван ен культури» урокĕсем йĕркелеме меллĕ. Юнашар ялти шкулсенче вĕренекен ачасемпе учительсем те кунта яланхи хăнасем. Музей кĕтесне уçнă чух Анисим Асламасăн ывăлĕ Алексей хăйĕн çемйипе Чехири Брно хулинчен килсе çитрĕç. Музей кĕтесне пысăклатас, ытти экспонатсемпе пуянлатас шухăшпа килĕшрĕ вăл, пулăшма шантарчĕ. Чăнах та, хальлĕхе музейĕн уйрăм пӳлĕм çук. Стендсенчи экспонатсем коридорта вырнаçнă. Анисим Асламасăн ячĕпе уйрăм музей пуласса ял çыннисем те, музыкăна кăмăллакансем те, чăвашлăхшăн тăрăшакансем те шансах тăраççĕ. Çу уйăхĕн вĕçĕнче паллă композитор 85 çул тултарнине халалласа Етĕрне районĕнчи Мăн Чурашра спорт ăмăртăвĕ ирттертĕмĕр. Куçса çӳрекен кубока (ăна Асламас ывăлĕ Алексей çирĕплетнĕ) çĕнсе илессишĕн Мăн Чураш, Уйкас Асламас, Палтай шкулĕсенчи командăсем 5 ушкăнпа тупăшрĕç. Хальхинче кубока мăнчурашсем çĕнче илчĕç. Çĕнтерӳçĕсене медальсемпе грамотăсем, парнесем парса чысларăмăр.

***А.В. ДАВЫДОВА**, Шупашкарти 2-мĕш гимназире пуçламăш классене вĕрентекен*

# Çĕнĕ «Ĕç тетрачĕ»

**Ялти шкулсен вĕренӳ расписанине çĕнĕ предмет — литература вулавĕ — кĕнĕренпе икĕ çул иртрĕ ĕнтĕ. Çак хушăра асăннă предметаăса хывмашкăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш классем валли çĕнĕ учебниксем тата ĕç тетрачĕсем тухрĕç (авторĕсем Т.В. Артемьева тата О.И. Печников). Виççĕмĕшсемпе тăваттăмĕшсем хальлĕхе «Тăван сăмах» кĕнекисемпех вĕренеççĕ. Вĕсемпе ĕçленĕ чух вĕрентекен ĕçне çăмăллатма, литература вулавĕн тĕллевĕсемпе задачисене пурнăçа кĕртме вара О.Г. тата А.Р. Кульевсем ятарлă ĕç тетрачĕсем хатĕрлерĕç. Иртнĕ çул çакнашкал тетрадь виççĕмĕш класс валли тухрĕ, кăçал — тăваттăмĕшсем валли.**

**Çĕнĕ вĕренӳ пособийĕн тытăмĕ ансат. Вăл «Тăван сăмахра» тĕл пулакан чи сăнарлă та илĕртӳллĕ хайлавсем патне панă ĕçсемпе ыйтусен хăйне евĕр пуххи. Тĕллевĕ вара — шкул ачисенчен чăваш сăмахĕн вăйне, ытарлăхне туякан, литература хайлавне туллин ăнланакан, унăн илемне витĕр куракан пултарулла вулавçă хатĕрлесси. Çавăнпа та ĕç тетрадĕнче литература теорийĕпе çыхăннă чи ансат ăнлавсен (эпитет, танлаштару, сăпатлантару, метафора т. ыт. те) пĕлтерĕшне уçса пани те, илемлĕх мелĕсене асăрхама хăнăхтарас тĕлĕшпе сĕннĕ ĕçсем те, хайлаври геройсене сăнлама, унти ĕçсен йĕркине курма вĕрентекен ыйтусем те пур. Тĕрлĕ пуç ватмăшсемпе вăйăсем ачасен тетрадьпе ĕçлес туртăмне пушшех те ӳстермелле. Авторсем предметсем хушшинчи çыхăнăва шута илни те ку пособин лайăх енĕ. Тĕрлĕ конкурссемпе олимпиадăсенче çĕнтерес текен ачасемшĕн вара ку ĕç тетрачĕ чăн-чăн пулăшуçă пулса тăрĕ.**

***О. ГЕОРГИЕВ***

